25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
5
ЫТЛАРИКУН
198(6435) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

НОВОЗЫБКОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пына çапăçусенче чапа тухнă чаçсене: ЕНШИН генерал-майорăн 307-мĕш стрелковăй дивизине, КАЗАКЕВИЧ полковникăн 399-мĕш стрелковăй дивизине, СМИРНОВ генерал-майорăн 73-мĕш стрелковăй дивизине, ОБОДОВСКИЙ полковникăн 193-мĕш танковăй полкне, ЛЕОНТЬЕВ майорăн 115-мĕш минометнăй полкне, ВОБЛОВ майорăн 84-мĕш гвардейски минометнăй полкне тата ЭРИСТОВ подполковникăн 1184-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкне „НОВОЗЫБКОВСКИ“ тесе ят парас тата малашне вĕсене çапла чĕнмелле тăвас:

307-мĕш Новозыбковски стрелковăй дивизи,
399-мĕш Новозыбковски стрелковăй дивизи,
73-мĕш Новозыбковски стрелковăй дивизи,
193-мĕш Новозыбковски танковăй полк,
115-мĕш Новозыбковски минометнăй полк,
84-мĕш гвардейски Новозыбковски минометнăй полк,
1184-мĕш Новозыбковски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕ.

Социализмлă Ĕç Геройĕсене Молотов, Берия, Маленков, Микоян юлташсене саламлани

ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ В. М. Молотов, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, А. И. Микоян, В. В. Вахрушев, И. Т. Тевосян, П. И. Коробов юлташсене Социализмлă Ĕç Геройĕн званине парасси çинчен кăларнă Указсене республикăри ĕççыннисем савăнăçлăн кĕтсе илчĕç. Предприятисенчи рабочисемпе инженерла-техникăла работниксем, служащисем тата колхозниксемпе колхозницăсем Социализмлă Ĕç Геройĕсене саламласа фронта пулăшассишĕн малашне тата та ытларах тăрăшса ĕçлеме пулаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ Социализмлă Ĕç Геройĕн званине илнĕ ятпа Молотов, Берия, Маленков, Микоян юлташсем патне, чăваш ĕççыннисен ячĕпе, саламлă телеграммăсем янă. Телеграммăра Социализмлă Ĕç Геройĕсене саламланă, чăваш ĕççыннисем тăшмана аркатса тăкмашкăн фронта пулăшассишĕн тата та вирлĕрех ĕçлеме пулни çинчен пĕлтернĕ.

ВКП(б) Обкомĕнче

ЧУГУН ÇУЛ ТРАНСПОРТНЕ ХĔЛЕ ХАТĔРЛЕНМЕ ПУЛĂШАС ТĔЛĔШПЕ ВУНĂКУНЛĂХ ИРТТЕРЕССИ ÇИНЧЕН

Чугун çул транспортне хĕллехи условисенче ĕçлеме лайăх хатĕрлесе çитерес шутпа ВКП(б) Обкомĕ октябрĕн 5-мĕшĕпе 16-мĕшĕ хушшинче чугун çул транспортне хĕле хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе вунăкунлăх ирттерме йышăннă. Вунăкунлăхра чугун çул хуçалăхĕнче тумалли ĕçсен планне пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле тата вутă турттарассине хăвăртлатмалла. Вунăкунлăха чугун çул работникĕсен, вĕсен çемьисен тата чугун çул çывăхĕнчи район центрĕсемпе хуласенчи служащисен, çавăн пекех колхозниксен вăйĕпе ирттермелле. Вунăкунлăхра чугун çул çинче ĕçлеме хуласемпе район центрĕсенчен кашни кун миçе служащи тата миçе колхозник тухмаллине палăртакан задание çирĕплетнĕ.

Чугун çул транспорчĕн хĕллехи ĕçĕсем вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине шута илсе, ВКП(б) Обкомĕ Шупашкар, Канаш тата Улатăр горкомĕсен секретарĕсене, Шупашкар, Ишлей, Çĕрпӳ, Красноармейски, Шăхасан, Канаш, Вăрмар, Куславкка, Йĕпреç, Вăрнар, Çĕмĕрле райкомĕсен секретарĕсене чугун çул транспортне хĕле хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе вунăкунлăх ирттерессине куллен ертсе пыма, ĕççыннисем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе анлăн сарса, вунăкунлăх хушшинче тумалли ĕçсене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме тата ирттерсе пурнăçа кĕртме хушса хăварнă. Пирĕн республикăри чугун çул организацийĕсем 1943—44 çулти хĕле хатĕр пулни çинчен паспортсем чи малтан илме пултарччăр.

Чугун çул дистанцийĕсен начальникĕсене Окин, Светоозерский, Макаров тата Бондаренко юлташсене вунăкунлăха тĕплĕн хатĕрленсе ирттерме, рабочисем валли ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ тупса пама, техника тĕлĕшĕнчен ертсе пыма, ĕçе тĕрĕс организацилеме тата ĕçлекенсен пурнăçпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пыма хушнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене—уяв парнисем

ШАХАСАН, октябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Мухтавлă Хĕрлĕ Çар кашни кун çĕнĕрен те çĕнĕ хуласене, халăх пурăнакан чылай пунктсене нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларать. Мухтавлă воинсен фронтри пултарулăхĕпе, çирĕплĕхĕпе тата геройлăхĕпе хавхаланса, пирĕн районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем патне Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă ятпа парнесем ярса пама хатĕрленеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем фронтри хăйсен тăванĕсем патне яма уяв кучченеçĕсем хатĕрлеççĕ. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз фронтовиксене 7 килограмм колбаса, 3 пăт тулă çăнăхĕ, 10 килограмм табак ярса парать. Ухманти «Победа» колхоз 25 килограмм табак, пĕр центнер шур çăнăх, 40 килограмм какай, 10 килограмм пыл ярса парать. Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз фронтовиксене ярса пама 2 пăт табак, шур çăнăх, колбаса хатĕрлет.

Ку ĕç районри ытти колхозсенче те хĕрӳллĕн пырать. Çапла вара районри ĕççыннисем тăван воинсем патне Октябрь уявĕ ячĕпе парнесем яма 120 пăт тулă çăнăхĕ, 180 пăт çĕрулми, 420 килограмм тăварланă какай, 150 килограмм колбаса, 2500 çăмарта тата 150 уйрăм посылка хатĕрлеççĕ.

Уяв парнисем пухас ĕçе районри комисси ертсе пырать, ялсовечĕсемпе колхозсенче те комиссисем тунă. Çĕнĕ Пинерти «Пионер» колхозра, сăмахран, комиссе колхоз председателĕ коммунист Викторов юлташ ертсе пырать. Ăна парторганизаци секретарĕ Варфоломеев, комсомол организацин секретарĕ Алексеева юлташсем активлăн пулăшса тăраççĕ.

П. ПЕТРОВ.
ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Комисси тунипе лăпланса ларнă

ИЕПРЕС. Маркс ячĕпе тăракан колхозра Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас тĕлĕшпе ятарласа комисси тунă. Анчах комисси членĕсем А. Костюкова, Е. Светопольская тата Никитина юлташсем паянхи куна çитсе те хăйсен ĕçне пуçăнман.

Çавăн пекех «Самолет» колхозри комисси те ăшă япаласем пухма тытăнман. Колхозницăсем нумайĕшĕ паттăр воинсем валли ăшă чăлхасемпе алсишсем çыхса хатĕрленĕ. Анчах та вĕсем ăшă япаласене кама памалли пĕлмеççĕ.

П. КУРАКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем ТАМАНЬ çурутравĕ çинче тăшмантан СТАРОТИТАРОВСКАЯ, КРАСНАЯ СТРЕЛА, ВОЗРОЖДЕНИЕ ятлă вăйлă çирĕплетнĕ пунктсене тытса илнĕ.

ГОМЕЛЬ енче пирĕн çарсем, уйрăм участоксенче 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ЯКУШЕВКА, БЕРЕЗЯКИ, КЛЯПИНО, НИКОЛАЕВКА, СТРУМЕНЬ, ОСИНОВКА, РУДНЯ БАРТОЛОМЕЕВСКАЯ, СИДОРОВИЧИ, БЕЛЯЕВКА, ЗАЛЕСЬЕ, ПОКОТЬ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

МОГИЛЕВ енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 270 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Могилев облаçĕнчи ДРИБИН ятлă район центрне, КУЗОВИНА, КРЮКОВЩИНА, ЗАТОНЫ, КАМЕНКА, ДЕДНЯ, БЫКОВО, ПРИЛЕСЬЕ, ДРАНИХА, ПРУДОК, ШАРОЕВКА, РЖАВЕЦ, ПРИПЕЧИНО, КРЕМЯНКА, ДВОРОВАЯ, СТАРАЯ КАМЕНКА, КРЕВЕЛИЦКА, КАЗАКОВКА, ДРАГОТЫНЬ ятлă пысăк пунктсене тата ВЕРЕМЕЙКА, ШАШИНА ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 90 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 51 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Тамань çурутравĕ çинче тăшман, артиллерипе минометсенчен вăйлăн персе тата контратакăсем туса, пирĕн çарсем малалла куçса пынине чарма хăтланать. Пĕр соединени боецĕсем, хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем пулăшнипе, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе тăкнă та Старотитаровская ятлă халăх пурăнакан вăйлă çирĕплетнĕ пункта тытса илнĕ. Çав пунктшăн пынă çапăçура 500 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Пĕр чаçри саперсем 7 кун хушши пынă çапăçусенче нимĕçсем лартса тухнă 60 пин минăна яхăн сиенсĕрлетнĕ.

Совет авиацийĕ çĕр çинчи çарсен ĕçĕсене активлăн пулăшса пынă. Пирĕн летчиксем пĕр çĕре пухăнса тăнă тăшман çарĕсене тапăнса, икĕ танк тата 50 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă, нимĕç пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Гомель енче пирĕн çарсем çаплах хĕвеланăçнелле куçса пынă. Пĕр соединенин чаçĕсем хаярран çапăçнă хыççăн тăшманăн тĕреклетнĕ пĕр пысăк пунктне тытса илнĕ. Нимĕçсем çак пункта каялла тытса илесшĕн темиçе контратака тунă. Пирĕн боецсем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă та, каялла чакакан гитлеровецсене хыççăнах хăваласа пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 12 тупă, ултă кĕпçеллĕ 2 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Могилев енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăрать. Анчах та совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе, халăх пурăнакан пĕр пункт хыççăн тепĕр пункта хăварса каялла чакать. Пĕр часть кун каçиччен тăшманăн ултă контратакине сирсе янă, унтан, хăвăрттăн пырса çапса, тăшмана каялла хăваласа янă. Кун каçичченхи çапăçусенче халăх пурăнакан 270 пункта ытла тытса илнĕ. Нимĕç пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. 28 тупă, 64 пулемет, 6 миномет, боеприпассен 2 складне, инженерла пурлăхăн складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Витебск енче пирĕн çарсем шурлăхлă, куçса çӳреме йывăр вырăнсенче çапăçнă. Вырăнти чăрмавсемпе тата инженерла сооруженисемпе усă курса, нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнă. Пĕр чаçри боецсем пĕр участокра çав тери хăвăрт атака тунă та питĕ паха позицисене тытса илнĕ. Нимĕçсем, хăйсен резервĕсене илсе пырса, контратака тунă. Кун каçиччен çапăçнă. Çапăçусенче çав позицисем темиçе хутчен те алăран алла куçнă. Кăç пулса килнĕ тĕлелле совет подразделенийĕсем, флангсенчен пыра-пыра çапса, тăшмана аркатса тăкнă та хĕвеланăçнелле ыvăтса янă. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Икĕ артиллери батарейине, 22 пулемет, 6 миномет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕнче тăшманăн 3.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне шыва путарнă.

* * *

Украинăра кĕрешекен партизансен Молотов ячĕпе тăракан отрячĕ сентябрĕн 17-мĕшĕ ывăн тенĕ чух çĕрле чугун çул хĕрринче засадăра ларнă. Партизансем чугун çулпа пыракан тăшманăн çар эшелонне пенĕ, паровоза сиенленĕ. Поезд чарăнса тăнă. Совет патриочĕсем, пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн персе, нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Житомир облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ иртнĕ уйăх хушшинче 300 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, минăсем лартса, 32 автомашина тата нимĕçсен 2 танкне сирпĕнтерсе янă. Чугун çул çинчи тата шоссе çулĕсем çинчи 7 кĕпере сирпĕнтерсе янă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен 321-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 589-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне куçнă унтер-офицер Август И. çапла каласа панă: «Вырăссем пирĕн оборона линине татса кĕрсен салтаксемпе офицерсем хушшинче питĕ пысăк паника пуçланса кайрĕ. Иккĕмĕш батальонри салтаксем малти линирен каялла нимĕн йĕркипе пăлхисĕр тарма пуçларĕç. «Вырăссем татса кĕчĕç!» тесе кăшкăрчĕç. Хăшпĕр салтаксем хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахса тарчĕç. Икĕ кун иртсен, 589-мĕш полкăн юлашкийĕсене пĕр пĕчĕк яла пухрĕç. Эпĕ унта çакна пĕлтĕм: пирĕн ротăри 180 çынтан чĕррĕн мĕн пурĕ те 20 салтакпа 3 унтер-офицер кăна тăрса юлнă. Ытти ротăсенче çухатусем пирĕннинчен те йывăртарах пулнă. Вĕсенче мĕн пурĕ те 6—8-шар çын кăна тăрса юлнă. Салтаксем пурте усалланса кайнă, пуçĕсене çĕрелле чикнĕ. Вĕсем ятлаçса çапла калаçрĕç: «Кунта пире пурне те вĕлерсе пĕтереççĕ, хăвăртрах каялла тарас пулать», терĕç».

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Орел облаçĕнчи Людиново хулинче тунă ирсĕр ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç ирсĕрĕсем пирĕн хулара икĕ çул хушши пуç пулса пурăнчĕç. Çав вăхăт хушшинче фашистла палачсем, нимĕçсен Биненсдорф хушаматлă комендантĕ ертсе пынипе, хулари 800 мирлĕ çынна ытла асаплантарса вĕлерчĕç е персе пăрахрĕç. Гитлеровецсем вырăнти халăха йăлтах çаратса тухрĕç, выçă вилĕмпе вилмелле турĕç. Выçса вилес мар тесе, нумайĕшĕ тула тухса тăкнă апат-çимĕç юлашкийĕсене, курăк тата вилнĕ лашасен ашне çисе пурăнчĕç. Совет çынни хăйне панă номера çакса ямасăр урама тухма пултарайман. Темиçе çĕр арçынпа хĕрарăма нимĕçсем вăйпа Германие каторгăллă ĕçе хăваласа кайрĕç. Гитлерла бандитсем хулана йăлтах ишĕлтерсе пĕтерчĕç, культура учрежденийĕсене çаратса, пĕтерсе тăкрĕç. Машинăсем тăвакан тата вăрман çуракан заводсене, электростанцие сирпĕнтерсе ячĕç. Пĕр рабочи поселокра кăна çав вăрă-хурахсем 200 киле яхăн çунтарса ячĕç. Пурне те пĕтерсе тăкасшăн çунакан бандитсем çимĕç кӳрекен йывăççене пурне те касса пĕтерчĕç.

Эпир çакна хыттă ĕненсе тăратпăр: фашистла палачсене вĕсен ирсĕр ĕçĕсемпе усал преступленийĕсемшĕн тивĕçлипе тавăрĕç».

Çак акта хула çыннисем Дмитрий Новиков, Анна Потапова—нимĕçсен çынçиенĕсем персе пăрахнă Екатерина Рыбкина амăшĕ, Анастасия Козлова, Ирина Степкина, Савелий Анисенков, Клавдия Новикова, Мария Кольцова тата ыттисем те алă пуснă.

Авиаци маршалне А. Е. Голованова „Маршал Çăлтăрĕ“ панă

Енер, октябрĕн 2-мĕшĕнче, Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Авиаци маршалне А. Е. Голованова Маршал палли —«Маршал Çăлтăрĕ» панă. (ТАСС)

Ĕççынни депутачĕсен районсовет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, уборка вăхăтĕнче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн, государствăна тырă парса татнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

18. Шăхасан районĕнчи **«Красный партизан»** колхоз (колхоз председателĕ **Васильев** юлташ). Ку колхоз 209 гектар тĕштырра 10 ĕç кунĕнче вырса пĕтернĕ. Кĕлтесене августăн 20-мĕшĕнче капана хывса çитернĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕнче авăн çапса тата кĕрхи çерте туса пĕтернĕ. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пĕтĕмĕшпех пухса кĕртнĕ. Государствăна тырă парса татнă. Кĕраки планне 103 процент тултарнă.

19. Шăхасан районĕнчи **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Кондратьев** юлташ). 369 гектар тĕштырăпа пăрçа йышши культурăсене колхоз, лайăх ĕçлесе, 19 ĕç кунĕнче вырса пĕтернĕ. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Çĕрулми кăларса пĕтернĕ. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

20. Çĕрпӳ районĕнчи **«КИМ» колхоз** (колхоз председателĕ **Андреев** юлташ). Колхоз тырăсене 12 ĕç кунĕнче вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Сентябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă. Кĕраки планне 7 ĕç кунĕнче 102 процент тултарнă.

21. Çĕрпӳ районĕнчи **«Луч» колхоз** (колхоз председателĕ **Николаев** юлташ). Çак колхоз тĕштырăсене сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕр тăккаламасăр вырса пĕтернĕ. Сентябрĕн 9-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

Фронтовиксен çемьисемпе вăрçă инваличĕсене пулăшасси—ялан тумалли ĕç

Çар çыннисен çемьисене пулăшасси пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕççыннисен чыслă ĕçĕ пулса тăрать. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен пирĕн мухтавлă воин хăйĕн çемьи государствăпа халăхран яланах тивĕçлĕ пулăшу илессе шанса тăрать. Çавăнпа вăл тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе чыслăхне хӳтĕлесе хăварассишĕн хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр çапăçать, отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартать.

Республикăри партипе совет организацийĕсем тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç.

Чăваш республикинче фронта кайнă çынсен çемьисене кăçалхи 8 уйăх хушшинче кăна государство 52 миллион та 714 пин тенкĕ пособи панă. Çав вăхăт хушшинчех çар çыннисен çемьисемпе отечественнăй вăрçă инваличĕсене тĕрлĕ тӳлевсем тăрăх 118 миллион та 816 пин тенкĕ льгота панă. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тӳлессинчен пиншер çемьене хăтарнă.

Çар çыннисен çемьисене, государство пулăшнисĕр пуçне, пĕтĕм халăх тĕрлĕ майсемпе пулăшса тăрать. Республикăри ĕççыннисем кăçал çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ятарласа вунăкунлăх ирттерчĕç. Вунăкунлăх тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе пирĕн халăхăн иксĕлми майсем пуррине тата пирĕн халăх ку ĕçе юратса, ăшă кăмăл туйăмĕпе тунине кăтартса пачĕ. Кăçал республикăри ĕççыннисем çар çыннисен çемьисене пулăшма 876.000 тенкĕ уçка, 108.824 пăт апат-çимĕç пухнă. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне колхозсем фронтовиксен çемьисене 38 пушмак пăру тата 302 çамрăк пăру, 8.155 сысна çури, 1.296 сурăх, 421 качака тата 15.000 пуç ытла хур-кăвакалпа чăх-чĕп панă. Фронтовиксен 15.369 çемьине, уйрăмах эвакуаци йĕркипе килнĕ çемьесене, пахча-çимĕç лартса хăварма 1435 гектар çĕр уйăрса панă, 385 тонна çĕрулми вăрлăхĕ тата ытти вăрлăхсем пухса панă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ XVI-мĕш пленумĕ «Çар çыннисен çемьисене пулăшу парасси çинчен» ВКП(б) Обком секретарĕн Андреев юлташăн докладне сӳтсе-яврĕ. Пленум фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçри çитĕнӳсемпе пĕрлех, республикăри партипе совет организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене те палăртрĕ. Партипе совет организацийĕсен хăшпĕр руководителĕсем ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленине кирлĕ пек пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Вĕсем фронтовиксен çемьисемшĕн большевикла тимлĕхпе тăрăшмаççĕ, çар çыннисен нушисемпе ыйтăвĕсем çине чунсăрла, чиновникле пăхаççĕ.

Пленум партипе совет организацийĕсем вăрçă инваличĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас, вĕсене ĕçе вырнаçтарас тата çĕнĕ профессисене вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. Вырăнсенчи социальнăй обеспечени отделĕсем нумайĕшĕ начар ĕçлеççĕ пулин те, ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем вĕсене тивĕçлипе пулăшса, ертсе пымаççĕ.

Пленум ВКП(б) Обкомĕн бюровĕпе Чăваш АССР Совнаркомне, ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсене, çавăн пекех ĕççынни депутачĕсен хуласенчи тата районсенчи совечĕсене ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1943 çулти январĕн 22-мĕшĕнче «Совет органĕсемпе вырăнти парторганизацисем çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» йышăннă постановление пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртме, çар çыннисен çемьисемпе вăрçă инваличĕсене пулăшас ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене кĕске вăхăтра, çине тăрса пĕтерме хушса çирĕп решени йышăнчĕ.

Пленум ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен секретарĕсене, хуласемпе район совечĕсен исполком председателĕсене пособисемпе пенсисем парас енĕпе ĕçлекен комиссисен ĕçне контрольлесе тăма, çар çыннисемпе вĕсен çемьисем, вăрçă инваличĕсем паракан заявленисемпе жалобăсене вăхăтра пăхса тухма, пособи тата пенси укçисене вăхăтра парса тăма хушрĕ.

Çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçе лайăхрах тăвас тесе, пленум ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен секретарĕсене, хуласемпе район совечĕсен исполком председателĕсене государствăна тырă памалли плана пурнăçланă хыççăн хуласемпе районсенче çар çыннисен çемьисене вăхăтлăх пулăшу пама укçа-тенкĕ тата апат-çимĕç фончĕсем тума сĕнчĕ.

Пленум çар çыннисен çемьисен хваттерĕсене кăçалхи ноябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр юсаса пĕтерме, çав вăхăт тĕлнех çар çыннисен çемьисемпе вăрçă инваличĕсен нушисене тивĕçтерме кирлĕ вуттăн 40 процентне хатĕрлесе турттарма, юлашки пайне вара 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлесе турттарма хушса хăварчĕ.

Пленум Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариатне тата Чăвашпотребсоюз президиумне çар çыннисемпе вăрçă инваличĕсен пурнăçра пуринчен малтан кирлĕ пулакан япаласемпе суту-илӳ тăвас ĕçе йĕркелеме, столовăйсен ĕçне лайăхлатма хушрĕ. Кăçалхи ноябрĕн 7-мĕшĕнчен кая юлмасăр ОРС-семпе хуласенчи суту-илӳ организацийĕсем çумĕнче фронтовиксен ачисем валли уйрăм столовăйсем уçмалла.

Çар çыннисен çемьисемпе вăрçă инваличĕсемшĕн тăрăшасси—ялан тата пысăк тимлĕхпе тумалли ĕç. Вырăнти партипе совет организацийĕсен ку ĕçе хуласемпе районсенчи мĕнпур ĕççыннисене, мĕнпур общественноçа явăçтармалла. Çар çыннисен кашни çемьи тата вăрçă инваличĕ хăйне тивĕçлĕ пулăшăва илме, ĕçе вырнаçма, çĕнĕ профессисем туянма, тăван çĕршыври, фронтри тата юта çĕршывсенчи хальхи лару-тăру çинчен вăхăтра пĕлсе тăма пултартăр.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ йышăннă решение большевикла пурнăçа кĕртсе пырасси—партипе совет тата профсоюзпа комсомол организацийĕсем çак ĕçе тивĕçлипе организацилеме пĕлнинчен нумай килет. Фронтовик çемьисене пулăшни—фронта пулăшниех пулни çинчен ĕççыннисене анлăн ăнлантарса парса, çак пахă ĕçе пĕтĕм халăха явăçтармалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 3-мĕшĕнче ГОМЕЛЬ енче пирĕн çарсем уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ЖАВУНИЦА, ЛОЗОВИЦА, МАЛАШКИ, СЛОБОДКА, УШПИТОВ, ВАСИЛЬЕВКА, ЗАГОРЬЕ, РЫСЛАВЛЬ, КИРИТОВКА ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

МОГИЛЕВ енче пирĕн çарсем уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ГЛУШЕЦ, ДРОКОВКА, ЛЮБАНЫ, ГИЖНЯ, ТЕЛЯШИ, БЕРЕЗОВКА, ЛЕТЯГИ, ЗАКРУПЕЦ, ГИЖЕНКА, КЛИНЫ, ДУБНО ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Ытти фронтсенче вăйлă разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă.

Октябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 155 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 42 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Гомель енче пирĕн çарсем уйрăм участоксенче çапăçса малалла куçнă. Пĕр чаçри боецсем тăшманăн темиçе хаяр контратакине сирсе янă, нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 20 пункта ытла тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 вилли çити выртса юлнă, 2 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен пĕр тупă тата минометсен икĕ батарейине тытса илнĕ. 120 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Могилев енче пирĕн çарсем Проня шывĕн рубежĕнче хаяррăн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшманăн артиллерийĕпе пулеметчикĕсем вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, каçă хывнă та Проня шывĕн хĕвеланăç енне каçнă. Питĕ хăвăрт маневр туса, пирĕн чаçсем нимĕçсене каялла хăваласа янă, çынсем тĕлĕшпе те, техника енчен те пысăк çухатусем кӳнĕ. Пĕр участокра кăна тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Хир тупписен 4 батарейине, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 тупă, 65 пулемет тата тĕрлĕ çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем 10 километр таран малалла куçнă та халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Пĕр пункта тытса илнĕ чухне гитлеровецсен икĕ ротине пĕтерсе тăкнă, боеприпассем, хĕç-пăшал тата нимĕçсем вырăнти халăхран туртса илнĕ пурлăха турттарса пыракан обоза тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн летчиксем Баренц тинĕсĕнче тăшманăн 6 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне шыва путарнă.

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн торпедăсем пăрахакан самолечĕсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен транспорчĕсене пыра-пыра çапнă. Торпедăсем тивнипе 3.000 тонна водоизмещениллĕ транспорт шыва путнă.

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ тăшман çарĕсене тата унăн ишмелли хатĕрĕсене пыра-пыра çапнă. Тăшманăн десант çарĕсене турттарса пыракан хăвăрт çӳрекен 3 баржине тата темиçе мотоботне шыва путарнă. 60 автомашина пĕтерсе тăкнă, гитлеровецсене виçĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче тăшманăн чугун çул çинчи хуралне аркатса тăкнă. 6,5 километр тăршшĕ чугун çул участокне çĕмĕрсе тухнă. Чугун çул хуралне пулăшма нимĕçсем пĕр эшелон çар янă. Партизансем пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, паровоза юрăхсăра кăларнă, тăшмана çапăçма хатĕрленме вăхăт памасăр, 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, ыттисем вара тарса пĕтнĕ. Темиçе кун иртсен, Минск партизанĕсем çав чугун çулăн тепĕр участокне 5 километр тăршшĕ çĕмĕрсе тухнă, нимĕçсен фронталла пыракан çар эшелонне пенĕ.

* * *

Нимĕçсен 3-мĕш полици полкĕнчи 9-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Якоб Горн çапла каласа панă: «Мана çар службине 1943 çулхи апрель уйăхĕнче илчĕç. Вара Голландири Хертогенбосс ятлă хулара тăракан вĕренмелли запаслă батальона ячĕç. Ку батальон вăл вăхăтра Прага хулинче тăракан полици дивизийĕ валли пополнени хатĕрленĕ. Августăн 9-мĕшĕнче батальона питĕ васкаса поезд çине лартрĕç те Хĕвелтухăç фронтне ячĕç. Эпир 3-мĕш полка лекрĕмĕр. Оборонăри йывăр çапăçусенче вырăссем пирĕн полка халран ячĕç. Сентябрĕн 15-мĕшĕнче полкран тăрса юлнă 140 çынтан пĕр рота туса хучĕç. 3 кунтан çак ротăран та 60 çын кăна тăрса юлчĕ»

* * *

Аялтарах нимĕçсен фашистла влаçĕсем Осипенко (Бердянск) хулинче тунă ирсĕр ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Азов тинĕс хĕрринчи Осипенко хулипе курорта, çав тери илемлĕскере, йăлтах ишĕлтерсе пĕтерчĕç. Нимĕçсен çар влаçĕсем—фашистсен гебитс-комиссарĕ Белетте тата унăн заместителĕ Кюнкеле мирлĕ халăха темĕн чухлĕ асап кăтартрĕç, нимĕн айăпсăр çынсене çаратрĕç, вĕлерчĕç. Туллимар даннăйсем тăрăх, гитлеровецсем оккупаци вăхăтĕнче 6000 граждана ытла персе пăрахрĕç. Чурасемпе сут тăвакан фашистсем 20.000 çынна — арçынсемпе хĕрарăмсене, çамрăк арçын ачасемпе хĕрачасене (хулара тата районра пурăнакансене) —Германие каторгăллă ĕçе ирĕксĕр хăваласа кайрĕç. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакас умĕн нимĕç ирсĕрĕсем ялхуçалăх машинисен Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тăракан заводне, Азово-Черноморски завода, крекинг заводне, сăран заводне, атă-пушмак фабрикине, икĕ кирпĕч заводне, эрех тата сăра завочĕсене, çăкăр пĕçерекен механически завода, çу çапакан 1-мĕш тата 2-мĕш заводсене, аш-какай комбинатне, «Рыбпром» заводне, пăспа ĕçлекен армана, хула электростанцийĕпе чугун çул станцине, физика меточĕсемпе сыватакан института, хула поликлиникине, туберкулез диспансерне, педагогика институтне, педагогика техникумне, 18 шкула, ФЗО шкулне, водниксен клубне, металлистсен клубне, пулă промышленноçĕнчи рабочисен клубне, учительсен клубне, хула театрне, краеведени музейне, хула библиотекине, 4 санаторие тата хулари пурăнмалли нумай çуртсене сирпĕнтерсе ячĕç.

Гитлеровецсем, персе пăрахассипе хăратса, хулари пĕтĕм халăха хăйсемпе пĕрле хăваласа кайма хăтланчĕç. Гестаповецсемпе жандармсен отрячĕсем хулари çынсене тытасшăн хупăрла-хупăрла илчĕç. Кăштах хирĕç каланăшăнах тата хуларан илсе каяссинчен пăрăнса юлма хăтланнăшăн пере-пере пăрахрĕç. Гитлерла палачсем хулара тата хула тулашĕнче темиçе кун хушшинче темиçе пин мирлĕ халăха, тăван хуларан тухса кайма килĕшмен пирки, персе пăрахрĕç.

Хулари пĕтĕм халăх ячĕпе эпир фашистла пуçкасакансемпе çынçиенсене вĕсен мĕнпур ирсĕр тата юнлă преступленийĕсемшĕн хаяррăн, никама та хĕрхенсе тăмасăр хирĕç тавăрма ыйтатпăр».

Акта алă пуснă: Осипенко хула совечĕн председателĕ А. Михайленко, врачсем—С. Самбурский, В. Миронов, М. Игошин, Л. Жукова, Е. Сопина, Азово-Черноморски заводри цех начальникĕн заместителĕ А. Желудько, çулйĕр дистанцийĕн начальникĕ И. Ляховец, соборти протоиерей Василий Попов, наборщица Мария Чичерова, депори токарь Николай Вацько, Азово-Черноморски заводри токарь С. Савин, «Рыбпромри» рабочи И. Квитко, учительсем—А. Копач, Н. Переверзева, М. Тищенко, Н. Сидоренко тата хулари ытти çынсем те.

Пирĕн авиаци Орша, Могилев, Джанкой чугун çул узелĕсене, Мелитополь станцине тата тăшманăн аэродромĕсене тапăнни

Октябрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Орша, Могилев, Джанкой чугун çул узелĕсене тата Мелитополь станцине тапăннă. Бомбăсем тӳррĕнех пырса тивнипе нимĕçсен 6 çар эшелонĕнчен кая мар çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Бомбăсем пăрахнипе пула, нумай вырăнсенче пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Боеприпассем тата тăшманăн çар пурлăхĕ тиенĕ вагонсемпе платформăсем нумай çунса кайнă.

Çавăн пекех тата пирĕн авиаци тăшманăн аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Самолетсем ларнă вырăнсенче бомбăсем çурăла-çурăла кайнине палăртнă. Пĕр аэродром çинче кăна нимĕçсен 12 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

Республикăри колхозсенче уборка ĕçĕсемпе кĕрхи çĕртме тăвасси октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă	Кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарнă
Улатăр	68,0	61,3	21,0
Элĕк	82,0	84,0	30,0
Вăрнар	75,9	88,1	33,6
Йĕпреç	72,9	60,0	21,8
Ишлей	79,6	100,0	24,2
Калинино	59,9	78,2	16,6
Канаш	63,1	96,3	23,8
Куславкка	74,9	68,5	27,1
Комсомольски	53,5	84,5	28,7
Красноармейски	67,3	91,1	32,6
Хĕрлĕ Чутай	65,5	68,6	15,3
Кувакино	59,9	31,7	13,2
Сĕнтĕрвăрри	65,7	81,6	25,8
Октябрьски	63,2	63,7	33,2
Первомайски	57,5	89,0	20,2
Пăрачкав	62,6	43,4	17,8
Советски	59,0	85,4	24,1
Сĕнтĕр	73,1	79,8	24,1
Вăрмар	72,3	79,0	19,1
Çĕрпӳ	65,8	81,5	27,2
Шупашкар	79,4	70,4	30,4
Чкаловски	60,2	82,9	23,9
Шăмăршă	73,9	92,9	26,5
Шăхасан	58,4	69,8	13,6
Çĕмĕрле	73,9	76,2	16,9
Етĕрне	65,5	81,9	32,0
Елчĕк	61,1	92,1	36,4
Тăвай	52,8	93,0	19,1
Шупашкар хули	68,4	79,7	49,6
ЧАССР тăрăх	67,3	79,3	24,5
Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пулнă	60,6	57,0	17,1

Государствăна пахча-çимĕç парса татнă

ИШЛЕЙ. Ядринкасси ялсоветĕнчи «Броневик» тата «Красный танк» колхозсем государствăна пахча-çимĕç, çĕрулми парса татрĕç. Халĕ ку колхозсенче хĕрсех çĕрулми кăларасçĕ.

А. ТОЛСТОВ.

Уйăхлăха хутшăннă хыççăн

ХЕРЛĔ ЧУТАЙ. (**Хамăр корр.**). Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли уйăхлăха хутшăннă хыççăн чылай колхозсем тимлĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Кашни колхоз халь ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе, государство умĕнчи обязательствăсене октябрĕн 25-мĕшĕччен парса татма тăрăшать.

Обыхово, Испухан, Тури Çĕрпӳкасси, Атнар тата Чербай ялсовечĕсенчи колхозсем çитес 2—3 кун хушшинче авăн çапса тата çĕрулми кăларса пĕтереççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем тырă памалли обязательствăсене тахçанах пурнăçланă. «Большевик» колхоз, (председателĕ Александров юлташ) государствăна тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕç сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне парса татнă. Çавăн пекех, ку колхоз аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм памалли обязательствăсене те ытлашшипех пурнăçланă.

«Будь готов» колхоз членĕсем государство умĕнчи парăмсене кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен, çĕрулмине —октябрĕн 5-мĕшĕччен парса татма пулнăччĕ. Илнĕ обязательствăна вĕсем пурнăça кĕртсе пыраççĕ. Паянхи куна колхоз государствăна тырă парса татрĕ. Юлашки кунсенче авăн çапас ĕç те хăвăртланчĕ. Ку таранччен 357 гектар çапнă, вăл пĕтĕм тырăран 89 процентне çапни пулать. Колхоз кишĕр кăларас, йĕтĕн-кантăр татса çапас, махорка пуçтарас ĕçсене те вĕçлерĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра та колхозниксем ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Вĕсем авăн çапса пĕтерчĕç. Ку ĕçре А. Маркелова, Т. Пажюкова, О. Маркелова, Г. Егоров, А. Чубайкина, П. Егорова тата ытти колхозниксем кулленхи ĕç нормисене 2—3 хут ирттерсе тултарса пычĕç.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз та государствăна тырă парса татрĕ.

.. ЛИСИН.

Пахча-çимĕçсем хатĕрлес ĕçе хăвăртлатмалла

Пахча-çимĕçсем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен организацисем чылайĕшĕсем хăйсен задачине ăнăçлăн пурнăça кĕртеççĕ. «Торгплодоовощтрест» системине кĕрекен Канашри контора пахча-çимĕçсене йышăнма лайăх хатĕрленнĕ. Вăл хăяр хатĕрлес плана тултарнă, купăста хатĕрлесе йӳçĕтес ĕçе ăнăçлăн туса пырать. Вăрмарти тата Куславккари конторăсем те япăх мар ĕçлеççĕ. Вăрнарти контора пахча-çимĕçсене типĕтес ĕçе лайăх организациленĕ. Мастер Захаренкова юлташ августпа сентябрь уйăхĕсенче пахча-çимĕçсем типĕтес плана 330 процент таран, мастер Катраснова юлташ пахча-çимĕçсем тăварласа йӳçĕтес плана 226 процент тултарнă. Анчах «Торгплодоовощ» предприятийĕсенче те çитменлĕхсем чылай-ха. Пахча-çимĕçсем типĕтекен заводсем валли топливо çителĕклĕ хатĕрлемен, катка-пичкесем кирлĕ таран çук. Çаксем ĕçре пысăк чăрмав кӳме пултараççĕ. Хатĕрлев организацисен руководителĕсен пахча-çимĕçсем хатĕрлес плана срокра тултарма мĕн кирлисене пурне те халех тумалла.

Пахча-çимĕçсем хатĕрлес тĕлĕшпе Чăвашсоюзăн хатĕрлев контори питех те сӳрĕк ĕçлет. Канаш райпотребсоюзĕн хатĕрлев контори (управляющийĕ Скворцов) хăяр тăварлас плана тултарман. Унта купăста тăварласа йӳçĕтесси те начар пырать. Улатăр тата Красноармейски райпотребсоюзĕсем те купăста йӳçĕтес енĕпе мухтанма пултараймаççĕ. Хатĕрлев конторисем хăяр, купăста йӳçĕтме катка-пичкесем çителĕклĕ мар тесе лараççĕ. Анчах катка-пичкесем çителĕклĕ пулманнишĕн те хăйсемех ответлă. Канаш райпотребсоюзĕн хатĕрлев конторине катка-пичкесем тумалли клепкăсене турттарма райсовет исполкомĕ туртăм вăйĕ уйăрса панă пулнă. Вĕсем ним тума юрăхсăр клепка турттарса тухнă. Халĕ вара материалсем çук тесе шавлаççĕ. Кун çинчен Чăвашсоюзĕн хатĕрлев конторин управляющийĕ Смыков та пĕлет, анчах нимĕнле мерă та йышăнмасть. Çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пымалла тăвас вырăнне, вăл «эпир ку ĕçре çĕнĕ çынсем» тесе ларать.

Пахча-çимĕçсем хатĕрлесси —халĕ тумалли ответлă ĕç. Хатĕрлев организацийĕсем тивĕçлĕн ĕçлесен, партипе совет организацисем вĕсене пулăшса пырсан, пахча-çимĕçсем хатĕрлес плана эпир вăхăтра тултарма пултаратпăр.

С. ФЕДОТОВ.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту сарăлса пырать

КАНАШ. (**Хамăр корр.**). Хулари предприятисемпе учрежденисем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, производство программине срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ. «Швейник» артель коллективĕ (председателĕ Ильин юлташ) август уйăхĕнчи ĕç планне 110,8 процент пурнăçланă. Паллă стахановкăсем А. Спиридонова, В. Платонова, Артюкова çĕвĕçсем кулленхи задание 200 процентран кая мар тултарса пынă.

Сентябрь уйăхĕнче артель коллективĕ производство планне 120 процент тултарма пулнă. Рабочисемпе работницăсем илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшса ĕçлерĕç. Е. Гамаляцкая юлташ ертсе пыракан цех уйăхри задание сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 120 процент ытла пурнăçларĕ. Мастер Б. Давидон юлташ ĕç нормине кашни кунах 200 процент тултарать.

Халĕ артельти кашни рабочипе работница çулталăкри производство программине Сталинла Конституци кунĕ тĕлне пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Октябрь уявĕ ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăрту кунта çĕнĕ вăй-хăватпа сарăлса пырать.

Ф. МАЛЫШКИН.

Çулталăкри плана 125 процент тултарнă

ЕТĔРНЕ, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Кирпĕч заводĕнче Октябрь уявне çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн социализмлă ăмăрту кунран кун анлăн сарăлса пырать. Нумай рабочисем, ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Евдокия Пажайкина, Ф. Петров тата Козлова юлташсем кунсерен 2-шер норма тултараççĕ. Соловьева, Тарасова, Афанасьева юлташсем нормăна 180-шар процент ытла тултарса пыраççĕ.

Завод коллективĕ сентябрĕн 27-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана 125 процент тултарнă. Халĕ вăл Октябрь уявĕччен çулталăкри плана 150 процент тултарассишĕн кĕрешет.

А. КРАСНОВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене— ăшă тумтирсем

ЙĔПРЕÇ. Районри колхозсенче паттăр воинсем валли ăшă тумтирсем пухасси активлăн пырать. Паянхи куна районри склада 400 мăшăр çăм чăлха, 350 мăшăр алшиш тата ытти ăшă япаласем пухса панă. Ку ĕçре уйрăмăнах «Красный Октябрь», «1-ое Мая» колхозсем аван ĕçлеççĕ.

Шупашкарти художествăллă пултарулăх смотрĕ

Сентябрĕн 13-мĕшпе 25-мĕшĕ хушшинче Шупашкар хулинче художествăллă пултарулăх смотрĕ пулса иртрĕ. Унта художествăллă пултарулăхăн 15 коллективĕ, уйрăм исполнительсем 200 çын хăйсен пултарулăхне кăтартса панă. Кружоксен выступленийĕсене пĕтĕмпе 4000 çын ытла курнă. Художествăллă пултарулăх кружокĕсен программисенче пуринчен ытла отечественнăй аслă вăрçă çинчен хывнă сăвă-юрăсем, калавсемпе пьесăсем пулчĕç.

Комисси 9 хор кружокĕнчен 6-шне, ташă кружокĕсенчен 7-шне тата пĕр драмкружока, уйрăм исполнительсенчен 62 çынна «отлично» хак панă, 38 коллектив «хорошо» паллăсем илнĕ.

Смотрта Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри пултарулăх кружокĕ мала тухнă. Комисси унти хор кружокне пĕрремĕш премие—1000 тенкĕ укçа памалла тунă. Çавăн пекех пир-авăр фабрикинчи хор кружокне (руководителĕ композитор Воробьев юлташ) тата килхуçи хĕрарăмĕсен хорне те (руководителĕ Терентьева юлташ) пĕрремĕш премие памалла тунă. Пĕр заводри ташă кружокне, пир-авăр фабрикинчи ташăпа драма кружокĕсене иккĕмĕш премие—750-шар тенкĕ укçа памалла тунă. Виççĕмĕш премие чăлха фабрикинчи тата пушар охранинчи хор кружокĕсене, Госбанкри драма кружокне, милици уйрăмĕнчи драмкружока тата пĕр заводри Франчик юлташ ертсе пыракан ташă кружокне панă. Кунсăр пуçне уйрăм исполнительсене 32 çынна, художествăллă пултарулăх руководителĕсене 7 çынна премиленĕ.

Смотр итогĕсене тăвас шутпа, октябрĕн 2-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар çуртĕнче вечер пулса иртрĕ. Унта смотрта мала тухнă художествăллă пултарулăх коллективĕсем хăйсен пултарулăхне тепĕр хут кăтартса пачĕç.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен 8-мĕш армийĕ Сан-Северо хули патĕнчен хĕвеланăçнелле куçса пырать. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Фриджонто тата Беневенто хулисене тытса илнĕ.

Каирти радио пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 5-мĕш армийĕ халĕ Неаполь хулинчен нумай малалла кайнă. Рим патнелле чакакан Германи çарĕсене хĕссе пыраççĕ.

Адриатика тинĕсĕн хĕррипче акăлчансен 8-мĕш армийĕ Лучеры хули патĕнчен хăвăрттăн малалла куçса пырать.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ЭМДЕН, МЮНХЕН ТАТА ВИНЕР-НЕЙШТАДТ ХУЛИСЕНЕ ТАПАННĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: американецсен «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем паян кăнтăрла Эмден хулине тапăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен çарĕсен Çурçĕр Африкăри штабĕ çапла пĕлтерет: октябрĕн 1-мĕшĕнче «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксем Мюнхена тапăннă. Вĕсем Çурçĕр Африкăран вĕçсе пынă, калла-малла 3.000 километра яхăн тунă. Пĕлĕтлĕ çанталăк тăнипе, бомбăсем пăрахни мĕнле сиен кӳнине пĕлме пулман.

«Либерейтор» йышши самолетсем Вена хулинчен 40 километр кăнтăрхĕвеланăçнерехре ларакан Винер-Нейштадт хулинчи «Мессершмитт» йышши истребительсем валли фюзеляжсем тăвакан завода тапăннă.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ МЮНХЕНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировщикĕсем Мюнхена хаяррăн тапăннă. Малтанлăха пĕлнĕ тăрăх, тапăнни питĕ ăнăçуллă пулнă.

Çав вăхăтрах тăшман шывĕсене минăсем пăрахса тухнă тата Рур облаçĕнчи тĕрлĕ объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Тăхăр бомбардировщик каялла хăйсен базисене таврăнман.

ССР СОЮЗĔН ВЕЛИКОБРИТАНИРИ ПОСОЛĔ Ф. Т. ГУСЕВ ЛОНДОНА ÇИТНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Лондона ССР Союзĕн Великобританири чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ Ф. Т. Гусев çитнĕ. Ăна ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн представителĕ Джон Монк, Совет Союзĕн Великобританири поверенннăйĕ А. А. Соболев тата совет посольствин составĕ хирĕç тухса илнĕ.

ГАРРИМАНА США-Н СССР-ĔНЧИ ПОСОЛĔ ПУЛМА ЛАРТНĂ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Шурă Çурт Аверелл Гарримана США-н СССР-ĕнчи посолĕ пулма лартни çинчен пĕлтернĕ.

КĔСКЕН

** Мальта утравĕ патне Италин тĕрлĕрен карапĕсем татти-сыпписĕр пырса тăраççĕ. Халĕ утрав патĕнче итальянецсен 65 карапĕ ытла тăрать. Вĕсен шутĕнче линкорсем, крейсерсем тата ытти суднăсем те пур.

** Француз партизанĕсем Шанси районĕнче вăйлă электричество пыракан пралуксене татнă. Вĕсем тăрăх Шнейдер завочĕсене электричество вăйĕ пырса тăнă.

Эмел курăкĕсем пухаççĕ

ЭЛĔК. (**Хамăр корр.**). Кăçал эмел курăкĕсем пухас ĕçе вĕренекенсемпе пионерсем активлăн хутшăннă. Уйрăмах ку ĕçе Вырăс Сорм, Тавăт ялповĕсене кĕрекен ялсенчи вĕренекенсем тимлĕн туса пынă. Çакна май вăл ялпосем эмел курăкĕсем хатĕрлемелли плана пур енĕпе те ытлашшипех тултарнă.

Районĕпе илсен, кăçал эмел курăкĕсем пухас ĕç ăнăçлăн пулса пынă. Райзаготконторăн план тăрăх 320 килограмм анис вăрри, 130 килограмм вĕлтрен çулçи, 50 килограмм йыт-çĕмĕрт йывăççин хуппине, 71 килограмм ромашка т. ыт. те пухмалла пулнă, вĕсем пурне те ытлашшипех пухнă. Пилеш пухмалли плана та 4 хут ытла ирттерсе тултарнă.

Тĕрĕсленсе килнĕ материалсем тăрăх

Кăçалхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатăн 184-мĕш номерĕнче Канаш районĕнчи «Хĕрлĕ Çар» колхоз çинчен «Сводка тăрăх уборка пĕтнĕ...» ятлă заметка пичетленсе тухрĕ. ВКП(б) Канаш райкомĕ çав материал тăрăх пире çапла пĕлтерчĕ: заметкăра пулнă фактсем пурте тĕрĕс. «Хĕрлĕ Çар» колхоз районра кайра пыракан колхозсен хисепĕнче тăрать. Кунта пур ялхуçалăх ĕçĕсене те вăраха хăварса пынă. Çакăн пирки колхоз председательне М. Малицкая юлташа, партин пуçламĕш организацин секретарьне Жарова юлташа тата ВКП(б) райком уполномоченнăйне Айдарова юлташа ВКП(б) райкомĕ асăрхаттарса хăварчĕ.

Халĕ çак колхозра ялхуçалăх ĕçĕсем лайăхланса пыни курăнать. Паянхи куна уйри кĕлтесене турттарса пĕтернĕ. Государствăна тырă памалли плана 75 процент пурнăçланă. Авăн çапассипе çĕрулми кăларас ĕçсем те ăнăçлăн пулса пыраççĕ.

Футбол

„Сталинец“ стадионра

Çак кунсенче Шупашкар хулине Мускавран «Локомотив» футболисчĕсен команди килчĕ. Октябрĕн 2-мĕшĕнче вĕсем «Сталинец» стадионра Вăрнар командипе футболла вылярĕç. Вăйă пуçламĕшĕнчех «Локомотив» команди пултаруллă вылянни курăнчĕ. «Локомотив» команди 10:2 шутпа çĕнтерчĕ.

Октябрĕн 3-мĕшĕнче «Локомотив» команди Шупашкарăн сборнăй командипе вылярĕ. Ăна вăл 6:2 шутпа çĕнтерчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПАТĂРЪЕЛĔНЧИ УЛМУÇÇИСЕМПЕ ÇЫРЛА ТĔМĔСЕН ПИТОМНИКĔ

кĕркунне сад пахчисенче лартса хаварма улмуççисемпе çырла тĕмĕсем: улмуççисем, грушăсем, чей çырли йывăççисем, хурлăхан, хăмла çырли йывăççисем, çĕр çырли тĕмĕсем, çавăн пекех тата декораци йывăçĕсем: вĕрене, тополь, çăка, акаци пурне те тата кама мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ сутать.

Адрес çапла: Чувашская АССР, село Батырево, Чкаловского района. 2—1.

Виççĕмĕш квартал ĕçĕ пĕтнĕ май ЧУВАШПРОМКАССА промартельсене çитес октябрь уйăхĕн 8-мĕш числиччен сентябрь уйăхĕшĕн тумалли страховой начисленисен расчет ведомоçĕсене тăратма ыйтать, çавăн пекех тата октябрĕн 20-мĕшĕччен 1943 çулхи взаимнăй расчетсене тĕрĕслесе тухас пулать. Кăтартнă вăхăтсем иртсен нимĕнле претензисене те йышăнмастпăр.

ЧĂВАШПРОМКАССА.

ЧĂВАШМЕЛЬТРЕСТА бухгалтер-ревизор, статистик-управделами, инженер-химик кирлĕ, çавăн пекех тата районсенче ĕçлеме армансен старши бухгалтерĕсем кирлĕ.

Шупашкарти арманта ĕçлеме рабочи-выборщиксем тата грузчиксем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 15, Чувашмельтрест. 2—1.

Чăваш АССР НКВД-ĕн Спецторгне çĕвĕçсем, атă çĕлекенсем, бухгалтерсем, буфетчицăсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ярославская 22, клуб Динамо. Спецторг.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1842 Типографи №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.